Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

*29 (7773) №* * *Юн кун, 2010 ҫулхи апрелӗн (ака) 21-мӗшӗ* * *Хакӗ ирӗклӗ*

**Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунне хатӗрленсе**

## Ачасемпе – тачӑ ҫыхӑнура

***«Муркаш районӗнчи ачасен пултарулӑх ҫурчӗ» хушма пӗлӳ паракан муниципаллӑ учрежденире хӗрӳ тапхӑр пырать. Ачасемпе республикӑра тӑтӑшах иртекен тӗрлӗ конкурссене хутшӑнма хатӗрленнипе пӗрлех майӑн 9-мӗшӗ ҫинчен самантлӑха та манмаҫҫӗ кунта. Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Алевтина Владимировна Рожкова директорпа Светлана Васильевна Егорова методист «Чечек ҫыххи – ветерана» ятпа курав йӗркелессипе те паянах тимлеҫҫӗ. Ветерансене пысӑк тимлӗх уйӑрмалли тӗп вырӑнта пулмаллине ӑнлантарса ӗҫе пахалӑхлӑ пурнӑҫлас тӗллевпе ачасемпе тӗрлӗ занятисем те ирттернӗ ӗнтӗ. Ӑста специалистсем районти пур шкулпа та тачӑ ҫыхӑнса ӗҫленӗрен, курав та самай пуян пуласси курӑнать.***

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**





## Аслӑ Ҫӗнтерӳччен 18 кун юлчӗ!

**Ҫур аки – 2010**

## Ӗҫсем пусӑнаҫҫӗ

**Ҫак вӑхӑта районти хуҫалӑхсенче 3441 тонна ҫӗр улми вӑрлӑхне суйласа яровизацилеме хунӑ. Ку енӗпе «Картофель» Агросоюз» ООО, С.К. Сретинский тата А.И. Толстов хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем ӑнӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ.**

**«ВаСем» ООО 20 гектар ҫинче кӗрхи культурӑсене минераллӑ удобренисемпе апатлантарнӑ.**

**«Ударник» хуҫалӑхра нумай ҫул ӳсекен курӑксене 100 гектар ҫинче минераллӑ удобренисемпе апатлантарнӑ тата сӳрелесе нӳрӗке хупласа хӑварнӑ.**

**Техникӑпа усӑ куракансене пӗлме**

## Умра – «Частник» операци

Ҫынсен харпӑрлӑхӗнчи тракторсемпе прицепсем юлашки вӑхӑтра самаях нумайланчӗҫ. Вӗсем ҫывхаракан ҫур акине те хутшӑнӗҫ. Ҫавӑнпа та Чӑваш Республикин хӑй тӗллӗн ҫӳрекен транспортпа ытти техникӑна пӑхса тӑракан Патшалӑх инспекцийӗ апрелӗн 19-мӗшӗнчен пусӑнса майӑн 14-мӗшӗччен уйӑхлӑх – «Частник» операци – ирттерет.

Ҫак тапхӑрта уйрӑм харпӑрлӑхри тракторсем тӗллӗшпе тимлӗх пысӑкрах пулӗ. Тӗрӗслевӗсем тракторсем пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене епле пӑхӑннине, усӑ курма май ҫук, кивелнӗ техникӑна учетран кӑларасси ҫине те пӳрне витӗр пӑхмӗҫ.

Тӗрӗслевсем ҫирӗплетнӗ графикпа кашни ял тӑрӑхӗнчех иртӗҫ.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР Гостехнадзор инспекцийӗн районти ертӳҫи.**

**Республикӑра**

## Республика Правительствин ҫӗнӗ йышне йӗркеленӗ

ЧР Президенчӗ Николай Федоров апрелӗн 19-мӗшӗнче Чӑваш Ен Министрсен Кабинечӗн ҫӗнетнӗ йышӗ ҫинчен калакан указсене алӑ пуснӑ. Правительствӑна ҫаксем кӗнӗ:

– **Владимир Владимирович Тимофеев,** Чӑваш Республикин Президенчӗн Администрацийӗн ертӳҫи;

– **Юрий Петрович Волошин**, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – Чӑваш Республикин промышленноҫпа энергетика министрӗ;

– **Александр Николаевич Гончаров**, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – Чӑваш Республикин хула тӑвас ӗҫ тата общество инфратытӑмӗн аталанӑвӗн министрӗ;

– **Михаил Васильевич Игнатьев**, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – Чӑваш Республикин ял хуҫалӑх министрӗ;

– **Николай Васильевич Смирнов**, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – Чӑваш Республикин финанс министрӗ;

– **Геннадий Семенович Федоров**, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗн ҫумӗ – Чӑваш Республикин Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ ҫумӗнчи полномочиллӗ представителӗ;

– **Анатолий Валентинович Ермолаев**, Чӑваш Республикин ҫут ҫанталӑк ресурсӗсен тата экологи министрӗ;

– **Роза Михайловна Лизакова**, Чӑваш Республикин культура, национальноҫсен ӗҫӗсен, информаци политикин тата архив ӗҫӗсен министрӗ;

– **Иван Борисович Моторин**, Чӑваш Республикин экономика аталанӑвӗпе суту-илӳ министрӗ;

– **Анатолий Арсентьевич Николаев**, Чӑваш Республикин физкультура, спорт тата туризм министрӗ;

– **Валерий Павлович Петров**, Чӑваш Республикин юстици министрӗ;

– **Галина Петровна Чернова**, Чӑваш Республикин вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин министрӗ;

– **Олег Степанович Шайнога**, Чӑваш Республикин пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен министрӗ.

## Ҫӗнелнӗ Правительствӑн пӗрремӗш канашлӑвӗ иртнӗ

Ҫав кунах Николай Федоров Президент хушнипе Чӑваш Ен Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Нина Суслонова Правительство ҫуртӗнче канашлу ирттернӗ. Унта республика Правительствин ҫӗнетнӗ йышӗпе паллаштарнӑ.

Канашлура ҫавӑн пекех республикӑн социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвӗн ҫивӗч ыйтӑвӗсене сӳтсе явнӑ, Правительствӑн ҫитес эрнери ӗҫӗн графикне палӑртнӑ.

**Хамӑр инф.**

**Налук ыйтӑвӗсемпе**

## Усӑ алӑксен кунӗ

Ҫынсен хӑйсен 2009 ҫулхи тупӑшӗсене декларацилессипе ыйтусем ҫук мар. Ҫавна шута илсе Федераллӑ налук службин Чӑваш Республики тӑрӑх районсем хушшинчи 6-мӗш номерлӗ инспекцийӗ асӑннӑ ыйтусемпе 2010 ҫулхи апрелӗн 25-мӗшӗнче 9 сехетрен тытӑнса 14 сехетчен усӑ алӑксен кунне ирттерет. Деклараци кампанийӗ вара апрелӗн 30-мӗшӗччен пырать.

Деклараци кампанийӗ вӑхӑтӗнче шӑмат кунпа вырсарни кун граждансене 8 сехетрен тытӑнса 16 сехетчен йышӑнаҫҫӗ.

**Хамӑр инф.**

**Диспансеризации ыйтӑвӗсемпе**

## Сывлӑха тӗрӗслемеллех

Диспансеризаци сӑмах кӗске вӑхӑт хушшинчех эпир тӑтӑш усӑ куракан сӑмахсен йышне ҫирӗппӗн кӗрсе вырнаҫрӗ.

Ҫак медицина тӗрӗслевӗ ҫынсен сывлӑхне тӗрӗслесе тӗрлӗ чирсене пуҫламӑш тапхӑртах тупса палӑртма май парать. Ӑна кирлӗ йышши медицина оборудованийӗсемпе усӑ курса пысӑк квалификациллӗ специалистсем туса пыраҫҫӗ. Ҫапла диспансеризаци сывлӑха анлӑрах тӗрӗслеме май парать те.

Кӑҫал та ҫак тӗрӗслев витӗр пурӗ 3646 ҫын тухмаллине калать «Муркаш районӗн тӗп больници» муниципаллӑ сывату учрежденийӗн поликлиника ертӳҫи А.П. Чиновникова. Ҫакӑ Чӑваш Республикинче 2010-2012 ҫулсенче планлӑ диспансеризацие ҫӗр процентлӑ ирттерес тӗллевпе ҫыхӑннӑ. Диспансеризацие вӑхӑтра пурнӑҫлас тесе ҫирӗплетнӗ графиксене пӑхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Кашни участока уйӑхсерен тӗрӗслесе тӑмалли ҫынсене ҫирӗплетсе панӑ.

Сывлӑхран хакли ҫук тетпӗр пулсан, медосмотр-и вӑл е диспансеризаци – пур тӗрӗслеве те вӑхӑтра ирттерни хамӑршӑнах усӑллӑ. Диспансеризаци тӳлевсӗр тӗрӗслев пулнине те манмалла мар, ӑна кӗске вӑхӑтрах вӗҫлеме тӑрӑшмалла.

Ҫак тӗрӗслев витӗр тухнисене, вӗсен сывлӑхӗ епле пулнине шута илсе, ларутӑрӑва уҫӑмлӑрах курма май пултӑр тесе тӗрлӗ ушкӑнсем ҫине уйӑраҫҫӗ.

«Пӗрремӗш ушкӑна сывӑ ҫынсене кӗртеҫҫӗ. Иккӗмӗш ушкӑнра – чире пуҫарма пултаракан факторсемпе ҫывӑххисем. Виҫҫӗмӗш ушкӑна чирлисем кӗреҫҫӗ (организмра чир паллисем пуррисем). Тӑваттӑмӗш ушкӑнра – стационарта сиплемелли чирсемпе чирлекенсем тата хаклӑ та сӳллӗ шайри технологиллӗ медицина пулӑшӑвӗ памаллисем. Тепӗр ушкӑна шаларах кайнӑ чирсемпе чирлекеннисене кӗртеҫҫӗ», – аса илтерет Алина Петровна.

Сывлӑха упрас тесе кашниех тӑрӑшмалла. Врачсен сӗнӗвӗсене пурнӑҫламалла. Больницӑна вара нумай чух мӗн те пулин ыратма пуҫласан ҫеҫ пыратпӑр. Апла пулсан медицина тӗрӗслевӗсем, диспансеризаци тени ют пулмалла мар. Врачсем ҫак тӗрӗслеве чӗнчӗҫ пулсан, пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах больницӑна ҫул тытмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Приглашает общественная приемная**

**С апреля 2010 года начала свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 4-14.**

**Поздравляем**

**ЗАО «МСО «Моргаушская» поздравляет всех ветеранов ВОВ с наступающим Великим праздником!**

**Всем ветеранам, купившим квартиру до 9 мая 2010 года в ЗАО «МСО «Моргаушская», организация сделает ПОДАРОК: отделка квартиры!!!**

**Обращаться по тел.: 63-1-19. 3-3.**

**Саламлатпӑр**



Хаклӑ та юратнӑ ҫыннӑмӑра – Москакасси ялӗнче пурӑнакан **Надежда Васильевна ФЕДОРОВАНА** 55 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, чӑваш сурпанӗ пек вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр сана. Телейпе ӑнӑҫу яланах юнашар ҫӳреччӗр, ӗмӗтӳсем ҫитсе пыччӑр, ҫемйӳнте татулӑхпа килӗшӳ хуҫаланччӑр. Кун-ҫулу вӑрӑм та телейлӗ пултӑр, мӗн шутлани пурнӑҫлантӑр. Эсӗ пурришӗн эпир пурте пӗрле савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывӑлӗ, мӑнукӗсем, Ланцевсен, Петровсен, Степановсен, Моисеевсен ҫемйисем тата ҫывӑх тӑванӗсем.**

Йӳҫкассинче пурӑнакан **Василиса Аполинариевна СЕРГЕЕВАНА** 55 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Эсӗ нумай ҫул хушши «Ударник» хуҫалӑхра ӗне сӑвакан пулса ӗҫлени тата тӑрӑшулӑхупа ырӑ ята тивӗҫни –мӑшӑрушӑн та, ачусемшӗн те, тӑванусемшӗн те хаклӑ парне. Паян та эсӗ ферма ӗҫне пӑрахмастӑн. Ӗҫӳнте ӑнӑҫу, пурнӑҫра вӗҫсӗр-хӗрсӗр телей, ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр. Санӑн ӑшӑ куллу пире нумай савӑнтарса пурӑнасса кӗтетпӗр-шанатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗ, ывӑлӗсем, кӗрӗвӗпе кинӗ, Перловсем, Алжировсем, Борисовсем, Тихоновсем, Ксенофонтовсем т. ыт. те.**



Юратнӑ мӑшӑра, ҫепӗҫ чунлӑ аннене, ырӑ кӑмӑллӑ кукамая, асаннене, хисеплӗ тӑвана – Мемеккасси ялӗнче пурӑнакан **Зоя Дмитриевна ПИГЕНЕШЕВАНА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухма пулӑшнӑшӑн ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр. Юбилей ячӗпе саламласа сана юман пек ҫирӗп сывлӑх, сурпан пек вӑрӑм кун-ҫул, телей, ӑнӑҫу сунатпӑр. Ӗмӗтленнӗ ӗмӗтсем ҫитсех пычӑр, сӗтелӳ ҫӑкӑр-тӑвартан ан татӑлтӑр, кӗрекӳ тӑванӗсемпе пуян пултӑр, ачусемпе, мӑнуксемпе савӑнса пурӑнмалла пултӑр.

**Салампа мӑшӑрӗ, ачисем, кинӗпе кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем, тӑхлачисем, ҫывӑх тӑванӗсем.**